Пурнăçа, çĕршыва юрат, тăван халăх мĕнпе чĕрĕ, çавна юрат!

# ТУСЛĂХ

НУРЛАТ РАЙОНĔН ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАÇАЧĔ
ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА

*Хаçат 1931 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче тухма пуçланă.* | N 79 (4648) | *1998 çулхи июль (утă) уйăхĕн 11-мĕшĕ, шăматкун* | *Палăртнă хакпа.*

## "Тухăç-98" пресс-группа пĕлтерет

Юлашки кунсенче çунă çумăр шăрăх çанталăка пула типнĕ çĕре лайăх шăварчĕ тата тырпул ÿстерекенсен кăмăлне кăшт çĕклерĕ. Вăл кукурузăн тата ытти йышши апатсен пысăк тухăçне пухса илме те шанăç кÿрет, çаплах курăксене иккĕмĕш хут çулса илме май парĕ, çав вăхăтрах пĕрремĕш хут çулнă курăксене типĕтсе кĕртме те чăрмантарчĕ. Ĕнерхи кун тĕлне районта типĕ курăк запасĕ 7,5 пин тонна ытла шутланнă, унăн 1 пин тонни ытла "Кондурча" ассоциацие тивет. "Татарстан" ассоциацире 600 тонна яхăн утă хатĕрленĕ, ăна пухса илес тĕлĕшпе ĕçсем иртнĕ кунсенче те малалла пынă. Юлашки пĕр кунра вара утăн чи пысăк запасне Синдряков ячĕпе хисепленекен ассоциацире тивĕçтернĕ. Хресченсен хуçалăхĕсен М.Джалиль ячĕпе хисепленекен, "Чулпан", "Тĕрнеç" ассоциацийĕсенче те пысăк ÿсĕмсем туни палăрать.

"Киклĕ" ассоциацире сенаж хывасси активлă пырать, кунта çакăн йышши апата пĕр пин тонна ытла хатĕрленĕ. Çак ĕçе "Кондурча", "Рассвет", Мичурин ячĕпе хисепленекен хуçалăхсем малтанхи пекех пысăк хăвăртлăхпа пурнăçлаççĕ. Вĕсенчен пĕрремĕшĕнче сенаж запасĕ çулталăка кирлĕ запасăн çурри ытла шутланать. Анчах та хуçалăхсенчен чылайăшĕ çак кирлĕ ĕçе пурнăçлама васкамаççĕ, тырпул пухса кĕртес ĕçсем тытăнасса кĕтеççĕ пулас, ун чухне унсăрăн та ĕç нумай пулни çинчен шухăшламаççĕ те куран.

АВМ агрегатсем начар мар ĕçлени вара савăнтарать. Вăрах вăхăт хушши ĕççĕр тăнă хыççăн вĕсене тата темиçе хуçалăхра хута янă. Ĕнерхи кун тĕлне хресченсен хуçалăхĕсен Мичурин ячĕпе хисепленекен, "Кондурча", Синдряков ячĕпе хисепленекен, "Урняк", "Киклĕ" ассоциацийĕсенче çакăн йышши апата 30-36-шар тонна хатĕрленĕ. Кузнецов ячĕпе хисепленекен, "Игенче", "Сĕнче" хуçалăхсенче курăк çăнăхĕн запасĕ чылай ÿснĕ, "Заветы Ильича" ассоциацире те АВМ пĕр кăлтăксăр ĕçлет, анчах та "Чулпан", "Тĕрнеç" ассоциацисенче, РСУн хушма хуçалăхĕнче лайăх енне улшăнусем çук-ха.

Хальхи вăхăтра эмел курăкĕсене те темиçе хуçалăхра çеç пухаççĕ. "Рассвет" вĕсене - 31, "Родина" 15 тонна пухнă, çакăн йышши апат запасĕ çак пĕр-икĕ хуçалăх шучĕпе кăна ÿсет.

Çĕр ĕçченĕсен умĕнче хальхи вăхăтра тăракан тĕп задачăсенчен пĕри вăл - кĕрхи культурăсем акма тăпрана хатĕрлесси. Çак агромероприятие хуçалăхсем пурте тенĕ пекех тытăнни вара питĕ савăнтарать. Кăçалхи типĕ çанталăкра ял çыннисем кĕрхи культурăсене çеç шанаççĕ, кăçал кĕркунне ытларах ыраш тата кĕрхи тулă акса хăварсан питĕ лайăх пулмалла. Çакна вара хуçалăхсем питĕ лайăх ăнланаççĕ, çавăнпа та халь тăпра хатĕрлес ĕçе çаннисене тавăрса пурнăçлаççĕ. "Агрохимсервисăн" хушма хуçалăхĕнче, Мичурин ячĕпе хисепленекен, Синдряков ячĕпе хисепленекен, "Сĕнче, "Урняк" ассоциацисенче 200-300-шер гектар тăпра ĕçлесе хатĕрленĕ ĕнтĕ. Анчах та Муса Джалиль ячĕпе хисепленекен, "Алга", "Комбайн", "Черемшан", "Рассвет" ассоциацисенче, сĕт-çу комбиначĕн хушма хуçалăхĕнче çакăн пек ĕçе пурнăçлама хатĕр участоксем çук-ха. Хăшĕ-пĕрисем иртнĕ çулхи уроксене маннă пулас.

## "Вырьăх апачĕ пулсан - ял пурăнать"

Пĕрре, иккĕ, виççĕ... тирпейлĕ купаланă пысăках мар 15 капан тăратчĕ хăйсен ентешгерой - Н.К.Синдряков ячĕпе хисепленекен хуçалăх хирĕсенче.

Ку вăл районти чи пысăк та çирĕп ассоциацисенчен пĕри. Апла выльăх апачĕ ÿстерекен участоксем те унăн пысăк - пурĕ 500 гектар пуçтарăнать.




- Авă, хыр вăрман патĕнче те çавăн пек капансем, - савăнăçлăн пĕлтерет хуçалăх ертÿçи Вагиз Абдрахимов. - Хĕлле те фермăсем патне турттарма меллĕ пулĕ, тем те пулма пултарать, капла вара шанчăклă. Костер, люцерна пек паха курăксене типĕ çанталăк пирĕн патра уйрăмах сиенлетмерĕ, çавăнпа та вĕсен аван тухăçне пухса илтĕмĕр. Капансене 600 тонна утă купаларăмăр.

Паллах, апатсем пухса илмелли кампание ăнăçлă ирттерни ăна йĕркелессин шайĕнчен нумай килет. Н.Н.Семенов ертсе пыракан кооператив механизаторĕсем хăйсен техникипе шурăмпуçпах хире тухнă: вăхăт васкатнине ăнланса, тăрăшса ĕçленĕ. Илья Айкинпа Владимир Михайлов Т-25 тракторпа çулнă, Юрий Леуков ута тавăрнă, Сергей Кротовпа Иван Киселев тата Илья хăй массăна купаланă вырăна сĕтĕрнĕ, унта ăна Иван Куликовпа Владимир Леуков учительсем тата унăн ашшĕ Владимир Яковлевич пенсионер, ассоциаци членĕсем икĕ Александр Сычевпа Порфирьев (юлашкисем иккĕшĕ ÿкерчĕк çинче) вăр-вар та пысăк çаврăнăçулăхпа купаланă.

- Ута халăха та пама планлатпăр, - тет председатель, - халь ялти кашни çын 2-3 ĕне, картиш тулли ытти выльăхчĕрлĕх усрать. Хальхи укçасăр вăхăтра урăхла пулма та пултараймасть. Хресчен выльăх ÿстерсе сутнинчен чĕрĕ укçа илет, хăйĕн продукцийĕпе усă курать, апла ял пурăнать.

**Ф.ЗИЯТДИНОВА.**



Н. АЗИЗОВ сăнÿкерчĕкĕсем.

## ИЮЛĔН 12-МĔШĔ - ПИТРАВ КУНĔ

**Районти чăвашсен фольклор праçникĕ "Уяв" ирхине 11 сехетре Чиешне ялĕнчи вăрман çывăхĕнче, Çарăмсан юханшывĕ хĕрринче пулать.**

*Программăра:*
- *праçнике хутшăнакансем ял урамĕсемпе утса тухасси;*
- *районти пултарулăх фольклор коллективĕсен концерчĕ;*
- *чăваш юррисем;*
- *наци кулинари блюдисен выставки;*
- *сăра речĕ;*
- *илĕртÿллĕ спорт ăмăртăвĕсем, вăйăсем, конкурссем;*
- *çутçанталăкра канасси.*

*Суту-илÿ точкисем (мороженăй, сĕткенсем, шашлык) ĕçлĕç.*

*Уяв вырăнне çитме сире трасса тăршшĕпе вырнаçтарнă маршрут паллисем пулăшĕç. Нурлатри автостанцирен Чиешне ялне маршрутри автобуссем çÿрессине йĕркелĕç.*

*"Уява" ырă сунса кĕтетпĕр!*

## Конкурс пулать

Район администрацийĕ çумĕнчи çамрăксемпе ĕçлекен пай ялта пурăнакан çамрăк мăшăрсене халалланă конкурс ирттерме планлать. Унта 30 çула çитмен, иккĕшĕ те хăйсен тăван ялĕнче пурăнакан, ĕçлекен, туслă, активлă, ĕçчен, ыттисемшĕн тĕслĕх пулса тăракан çамрăк мăшăрсем хутшăнма пултараççĕ. Çак конкурса хутшăнас текенсене çамрăксемпе ĕçлекен пайра регистрацилеççĕ (тел. 2-16-72). Конкурс август уйăхĕ пуçламăшĕнче пулать, чи лайăх çамрăк мăшăрсене асăнмалăх парнесем кĕтеççĕ. Анчах та, хисеплĕ вулакансем, çак чаплă уява хатĕрленнĕ чухне сирĕн пулăшăвăр та кирлĕ пулать. Çак конкурса чи лайăх ят паракана ятарлă парне кĕтет. Сирĕн сĕнĕвĕрсене кĕтетпĕр!

## Ăшшăн саламлатпăр!

Районти инвалидсен пурнăçĕпе çыхăннă тĕп ыйтусене татса парассине пысăк тÿпе кĕртнĕшĕн тата Пĕтĕм Раççейри инвалидсен обществин Тутар республикинчи тата районсенчи организацийĕсене йĕркеленĕренпе 10 çул çитнине уявланă май инвалидсен обществин председательне **Аглям Закирович КАБИРОВА** Нурлат районĕпе Нурлат хулин администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

## Пăхса тух. Танлаштар. Вывод ту.

**Цифрăсен пĕрремĕш графи - ултă уйăхра патшалăха пĕр ĕне пуçне сутнă сĕт, иккĕмĕшĕ - ултă уйăхра пĕр ĕнерен вăтамран сĕт сунă, виççĕмĕшĕ - июнь уйăхĕнче (килогрампа), тăваттăмĕшĕ - таварлăх (процентпа).**

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| "Дуслык" | 2906 | 3371 | 650 | 86 |
| "Кондурча" | 2829 | 3331 | 733 | 85 |
| Синдряков яч.хис. | 2074 | 2411 | 547 | 86 |
| Мичурин яч.хис. | 2124 | 2600 | 543 | 82 |
| "Сĕнче" | 1948 | 2362 | 441 | 82 |
| "Киклĕ" | 1745 | 2015 | 450 | 87 |
| "Родина" | 1693 | 1982 | 374 | 85 |
| Сахăр завочĕн х/х | 1666 | 2054 | 419 | 81 |
| Хафизов яч.хис. | 1626 | 2059 | 526 | 79 |
| "Тĕрнеç" | 1410 | 1652 | 329 | 85 |
| "Черемшан" | 1321 | 1827 | 406 | 72 |
| "Рассвет" | 1310 | 2259 | 497 | 58 |
| "Заветы Ильича" | 1283 | 1915 | 519 | 67 |
| Кузнецов яч.хис. | 1266 | 1622 | 412 | 78 |
| "Заря" | 1253 | 1531 | 360 | 82 |
| РСУн х/х | 1250 | 1564 | 331 | 80 |
| "Чулпан" | 1158 | 1451 | 338 | 80 |
| М.Джалиль яч.хис. | 1137 | 1829 | 457 | 62 |
| "Татарстан" | 1100 | 1435 | 301 | 77 |
| "Игенче" | 1033 | 1296 | 285 | 80 |
| "Урняк" | 985 | 1355 | 300 | 73 |
| "Тан" | 940 | 1295 | 312 | 73 |
| "Алга" | 940 | 1219 | 258 | 77 |
| Сĕт-çу комбиначĕн х/х(2) | 902 | 1540 | 515 | 59 |
| Сĕт-çу комбиначĕн х/х(3) | 902 | 1540 | 371 | 59 |
| "Комбайн" | 900 | 1080 | 229 | 83 |
| "Нур" кооператив | 734 | 1290 | 346 | 57 |
| Нефтебазăн х/х | 634 | 1112 | 193 | 57 |
| "Каенлык" кооператив | 308 | 620 | 101 | 50 |
| **Район тăрăх** | **1363** | **1763** | **393** | **77** |

# Пĕрле утма çăмăлрах

*Тахçантанпах хаçата пĕр сăмах та çырманччĕ: ара, çирĕм пилĕк çул ытла сĕтел хушшинчен тухмасăр тенĕ пек хаçат "кĕтӳçи" пулнă-çке, ăна мĕнле вăйлă юратсан-хисеплесен те, пыра-киле кăштах пиçĕхтерет иккен. Канас тенĕччĕ çапмалли машинкăран, ыттисем çырнине вуласа, хам ĕç çине айкинчен пăхас терĕм пуль.*

*Унтанпа, çар хаçатĕнче ĕçлеме чарăннăранпа, шывĕ те сахал мар юхса иртрĕ. Радиора ĕçлесси, мĕн каласан та, урăхларах япала...*

*Паян акă татах кӳлĕнсе пăхас терĕм.*

*Сăлтавĕ ытла та пысăк-çке...*

ЮБИЛЕЙ

Пĕр шкулта, Якаелĕнче, вĕреннĕ эпир Юрий Анисимовпа. Эпĕ тĕнчене касса çӳресе пуçа та шуратма ĕлкĕртĕм, Хусана таврăнса йăва çавăртăм, Юркка вара ялан Тăван çĕршывра. Утмăл çул тултарать Юрий Васильевич Анисимов çак кунсенче. Ĕçлессе Тутарстанри мелиораторсен коллективĕн пуçлăхĕн çумĕ пулса ĕçлет. Питĕ те пысăк вырăнта, министр çумĕ. Çур ĕмĕре яхăн пĕр-пĕрне курманни, халĕ акă тăватă çул ĕнтĕ кашни кун тенĕ пекех пĕрле. Пĕрле утма çăмăлрах иккен. Çăмăл машинăпа Шупашкартан таврăнатпăр. Патшалăх кунĕн уявĕнчен. Сăмах хыççăн сăмах. Эпĕ ыйтатăп, вăл чунне уçса пырать.

***- Юрий Васильевич, ма ялан унталла-кунталла пăхса пырас, тĕпчевçĕсем мар вĕт.***

- Куçа курма тунă, пуçа шухăшлама. Ав, пĕр карчăк утă çулать. Качакипе путекки ăна сыхлаççĕ тейĕн. Пурнăç тăвасшăн.

***- Ăçтан пĕлетĕр?***

- Улпут ывăлĕ пулса ӳсмен вĕт, нуша-тертне шăннă паранкăран пĕçернĕ пашалупа хырăма тăрантса чĕре витĕр кăларнă. Ĕне пурри - çур пурнăç теççĕ, качака пурри хăшĕ-пĕриншĕн çав-çавах.

***- Пăхăр-ха, Юрий Васильевич, мĕн хăтланаççĕ ав çав ялтах? Туй-и ку е ?..***

- Мĕн пулса иртмест пулĕ пĕр вăхăтрах: пĕри савăнать, тепри куççульне тăкать. Курмастăн-им, пĕр урамра туй кĕрлет, тепринче тупăк йăтса тухаççĕ. Пурнăçпа вилĕм пĕр-пĕринчен пăрăнса çӳреççĕ тенине илтнĕ эпĕ. Тĕрĕсех-ши? Вăхăт çитсен пурпĕрех тĕл пулаççĕ пуль.

***- Философи çулĕпе утар мăр-ха, хамăр лав çинех ларар. Пуçăра паянхи кун ытларах мĕн ыраттарать?***

- Хĕртсе хĕвел пăхать пулсан та мана паян темшĕн-тĕр шартлама сивĕри пек. Халăх пирĕн ĕçлет, тăрăшать, тар кăларать, савăнăçĕ сахалтарах, шанчăкĕ чĕптĕм те çук. Ултавçăсем нумайрах, пуçлăхра лараканнисем ахаль халăха хисеплеме пăрахрĕç. Вун-вунпилĕк çул каялла ăна ячĕшĕн те пулин тăвас тесе тĕрмешетчĕç, халь пĕтрĕ ку йăла. Мускаврва час-часах пулкалатăп вĕт, Патшалăх Думин депутачĕсемпе ăнакăна сӳтсе явма тӳр килет. Нимле пулăшу та, ăнлану та çук. Ял çыннине пăрахăçа кăларчĕç. Çакă манăн чĕрене çĕçĕ пек касать. Пасар кутамккине ват карчăксем хулпуççи çине çĕклеймеççĕ, пенсипе кăна мĕнле пурăнмалла? Çăкăрпа чей ĕçме çитĕ ĕнтĕ, ытти вара? Аркатса тăкма çич çулхи ача та пултарать, çĕнĕрен тума çамрăккишĕн те питĕ йывăр. Кунĕ-çĕрĕпе ĕçлеттĕмĕр, темле савăнăç çуначĕ пурччĕ пирĕн халăхăн. Халь ним те çук, ырри те пулаяс çук. Пуррине сыхласа, упраса хăварма тăрăшрăм, çынна сăлтавсăр ӳпкелесе каланă сăмахăм та пулман-тăр, малашнехине пĕр Турă пĕлет. Анчах парăнас килмест, ялан яла пулăшас кăмăл çĕкленет. Шăрăх кăçал, чăтма çук, мелиораторсем алă усса лармарĕç, пиншер гектар çĕре шăварса тыр-пул, утă, пахча-çимĕç ӳстереççĕ. Акă "Волжанка" кĕрлесе ĕçлет: куратăп та çав тери савăнатăп. Пирĕннисем хĕрӳ ĕçре!

***- Хăй еверлĕ карт-бланш пирĕн калаçу. Васкар малалла. Кам вăл сирĕншĕн чăн-чăн чăваш?***

- Ĕçченлĕхпе мухтанас марччĕ. Çум çумлама, ĕне сума, кĕтӳ кĕтме хура ĕçе такам та пултарать. Чăваш çынни ăслă пултăрччĕ, хăюллă. Пирĕн çын хăйĕн турă панă ашшĕ-амăш чĕлхипе мухтанса, савăнса калаçтăр, ытти чĕлхисене те лайăх пĕлтĕр. Вырăс, акăлчан, нимĕç, француз тата тĕнчери ытти паллă халăхсен чĕлхине пĕлни сывлăш пек кирлĕ паянхи кун. Çавăнпа ачасене мĕн вăй çитнĕ таран тăрăшса вĕрентесчĕ.

***- Чăвашсем кама шанаççĕ?***

- Ытларах хăйне шанать чăваш, çакна эпĕ çамрăкранах асăрханă. Эсĕ те, эпĕ те аслă пĕлӳ туяннă. Кам пире пулăшнă вĕренме кĕме? Хамăра çеç шаннă. Пурнăçра та çаплах. Мордва республикинче ĕçленĕ чухне эпĕ çамрăк инженерччĕ-ха, йывăрлăхсем мăй таранччĕ, çĕрĕпе çывăрмастăмчĕ: мĕнле майне тупмалла, ĕçе мĕнле лайăхрах хута ямалла? Тата эпĕ парти секретарĕ те пулнă-çке: пуху çине пуху, ĕç тумастпăр, кунĕпе сăмах ваклатпăр. Çиччĕ виçсе пĕрре касма тăрăшаттăм. Чăваш вак-тĕвек ĕçпе çынна чăрмантармасть. Нимене те тĕплĕн хатĕрленнĕ хыççăн çеç иртерет. Анчах çак пĕрлĕх туйăмĕ темшĕн ниме хыççăн сĕвреlет, тăван-пĕлĕш виçипех çырлахать, пĕтĕм халăх шайне тухаймасть. Тавракурăм çинчен ялан шухăшламалла пирĕн, ӳстермелле ăна, ыттисенчен вăтанса-именсе тămалла мар. Ав тутарсем еплерех вăл енчен: вĕсенчен эпĕ нумай чух тĕслĕх илетĕп. Пытармастăп.

***- Пур-и юрату çак çутă тĕнчере? Тен, ăна поэтсем кăна шухăшласа кăларнă?***

- Питĕ те чеелле панă ыйту. Юратусăр пурăнни пуш параппан çапни кăна вăл. Хĕрарăм - пурнăç тытăмĕ. Хитре пулччăр пирĕн чăваш хĕрарăмĕсем. Хăшĕ-пĕри акăш-макăш мĕн те пулин тăхăнса ярать те çӳрет эрни-эрнипе çак тумпа: халат, фуфайка, калуш. Укçи те пур, тумĕ те çителĕклĕ, анчах хăй çине çаврăнса пăхасшăн мар пирĕн мăнаккасем. Юрать мана, ват çынна тесех ĕмĕрне хура пурнăçпа ирттереççĕ. Ыттисем мĕн калĕç тесе шухăшламаççĕ пуль вĕсем.

***- Юратнă учительница пирки мĕн каласшăн?***

- Хĕрарăм çинчен вĕт-ха сăмах, ан васка: арçынсем хитре хĕрарăма юратни питĕ те тĕрĕс япала. Вырăсĕ-тутарĕ те, чăвашсен те качча илнĕ чухне чи хитрисене суйласа илеççĕ вĕт . Шел, пирĕн хĕрарăма та эрех пĕтерет, пытармалла мар çак намăса. Зоя Васильевна Герасименко пире ял хуçалăх институтĕнче Хусанта практика ĕçне вĕрентетчĕ. Ун пек хитре те уçă кăмăллă хĕрарăма эпĕ курман. Пăхма хăй пирĕшти тейĕн, сăмахĕсем шыв пек юхса пыраççĕ. Миçе арçын юратса пăрахман-ши ăна? Час-часах тĕл пулатăп унпа: çитмĕлтен иртнĕ, анчах сăнĕ-пичĕпе çамрăк хĕрарăмран уйăраймăн. Чăваш хĕрарăмĕсем те пур çакăн пеккисем: ăслă, сăпайлă, анлă тавракурăмлă, мăнкăмăллă /ку та кирлĕ!/, пултаруллă. Паллах чуна ыраттармалла хитре, илемлĕ! Нурлатра та, Аксура та, Пăвара та, Шупашкарта та сахал мар сăнанă эпĕ çакна. Арçынпа хĕрарăма пĕр-пĕрне юратма тунă, юнашар савнă хĕрарăм пулмасан, пурнăç тути - армути. Юратуран вăйли вилĕм кăна. Çамрăксем çакна пĕлме тивĕçлĕ.

***- Ĕç пирки пĕр-ик сăмах.***

- Ăна та юратса тумалла. Ачаранах эпĕ хам та çак йĕркерен тухман. Сăмахĕ сахалтарах пултăр, ĕçĕ ытларах. Пилĕк пуслăх тунă ĕçпе каппайса çӳрени те вырăнлă марçке. Ытлашши чысланине те ырламастăп. Нимĕçсем мĕнле ĕçленине пĕлетĕн ĕнтĕ: пуçланă-тăк, ăна вĕçлемелле, йĕркелĕх кирлĕ, яваплăх. Социализм-и, капитализм-и, çын хăй пуçĕпе шухăшласа ĕçлесен усси ытларах пулать. Çĕнĕ пуçлăхсем килсен пурнăç çăмăлланĕ-ха тесе кĕтсе пурăнни хăвна ху суйни кăна.

***- Чăвашăн тавлашасси-харкашасси, кĕвĕçесси, пĕр-пĕрне ним сăлтавсăр ура хурасси чунра-юнра мар-ши тетĕп?***

- Çакнашкал шухăшпа килĕшместĕп. Пĕтĕмĕшле килĕшместĕп теесшĕн. Кĕвĕçӳ туйăмĕ чи начар туйăм вара, çынна çиекен, халăха пăтраштаракан япала вăл. Патриарх Иван Яковлевич Яковлев та пĕрмай асăрхаттарнă ун çинчен. Тепĕр чух пĕр-пĕрне пулăшса, юратса, хисеплесе пурнăç тăвас вырăнне ялти те, хулари те вăрçса пĕтет, намăсне çухатать. Çакăншăн ытти халăхсен умĕнче хăвна ху аван мар туятăн. Мĕнле каламалла ăна, мĕнле вĕрентмелле пурне те чăтăмлă та сăпайлă, ăслă пулма - пĕлейместĕп. Чăваш наци конгресĕнче те эпĕ çакна пĕрре мар сăнанă.

***- Утмăл çул пурăнса иртересси -ултă мăшăр мунча милĕкĕ çыхасси мар. Чунăр малалла мĕнле туртăнать?***

- Урăх çул çине тухма шухăшăм çук. Сывлăхăм пулсан - ĕçлесшĕн çак вырăнтах. Тăван халăхпа пĕрле пуласшăн, тăван яла пулăшасшăн. Çемьере йĕркеллĕ темелле. Ывăлпа хĕрĕм шанчăклă çынсем. Тата тĕллевсем те пур-ха. Ман-ман-ха: аллăмĕш çулсенче ялăн сад пахчи çумĕнче арбуз ӳстеретчĕç. Çав тери тутлăччĕ вăл. Шыв-шура типĕтсе, çак ĕçе çĕнĕрен хута ярас кăмăл пур. Тата Уксăмлă енчен вăрттăн шăвакан çырма-çатра масар патнех пырса çитнĕччĕ ĕнтĕ, ыран-паян хĕрес юписем куçран çухалатчĕç. Çăлса хăвартăмăр. Иртнĕ эрнере кунта атте-аннен вил тăпри çине кĕрсе тухрăм. Пурте йĕркеллĕ масар çинче. Хам сăваплă тивĕçе пурнăçланă пек туйăнчĕ. Вилнисем умĕнче эпир парăмлă. Ĕмĕтсем манăн таса: çын пек пурăнса иртересчĕ пурнăçа.

**- Сывлăх сунатăп сире, Юрий Васильевич, ăраскал. Пĕрле пулар. Хусанта тĕл пулнăранпа тăватă çул тулать. Пĕрле пурăнма çăмăлрах: шанăç пур, юлташ пур, чăн-чăн юлташ, ентешĕм! Турă пулăштăр иксĕмĕре те малашне .**

**Петр МИРОВ,**
**Тутарстан радиори чăваш кăларăмĕсене ертсе пыраканĕ, Тутарстан культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ.**

***Вăтам шкултан вĕренсе тухнă хыççăн Рияз фермăна килнĕ те салтака кайиччен çакăнта вăй хунă. Тăван çĕршыв умĕнче хăйĕн тивĕçне пурнăçланă хыççăн яш каллех Анат Нурлатри сĕт-çу ферминче слесарь-вакуумщик пулса ĕслеме тытăнать. Лăпкă, ырă кăмăллă Рияз хăйĕн тивĕçĕсене ăнăçлă пурнăçлать, механизмсене кăлтăксăр ĕçлеттерессине тивĕçтерет. Дояркăсем унăн ĕçĕпе кăмăллă, "ылтăн" алăллă ăстаçă теççĕ ун çинчен. Чăнах та Рияз çĕмĕрĕлнĕ магнитофон та, транзистор та юсама пултарать. Гумерова коллективра тивĕçлипех хисеплеççĕ.***

***Ӳкерчĕкре: "Кондурча" ассоциаци ĕçченĕ Р.Гумеров.***



* Тем те пĕр

## Машăпа Даша аса илеççĕ

Машăпа Даша Кривошляповасене -сиам йĕкĕрешĕсене пĕтĕм Раççей пĕлĕт. Хальхинче вĕсем иртнине аса илме кăмăл тунă. Çакăн çинчен йĕкĕрешсене Александр Метелев нарколог-тухтăр пĕлтернĕ: эрех-сăрапа виçесĕр айкашнине пула вĕсенчен пĕрне кодировка мелĕпе сипленĕ вăл. Анчах эрехсĕр пурнăç хĕрсене кичем пек туйăннă иккен...

Мускавра пурăнакан Америка журналисчĕн сĕнĕвĕ питĕ вăхăтлă та вырăнлă пулнă: вăл йĕкĕрешсене хăйсен пурнăçĕ, тусĕсем çинчен аса илсе çырма хушнă. Машăпа Даша Кривошляповасем çирĕплетнĕ тăрăх, кĕнеке-асилӳ çырма вĕсем пысăк хаваспа пуçăннă.

## Пенсионерăн пĕр витре тимĕр укçа пухăннă

Пурнан пурнăçра кам мĕнпе йăпанса пурăнать çав. Пĕри эрех савăчĕсене пухать, тепри - тĕрлĕ çĕршывра кăларнă илемлĕ маркăсене.

Украинăри Владимир-Волынск ятлă хулара пурăнакан Юрий Староверский пенсионер укçа пухма юратнă. Хут укçа шанчăклă мар тесе, вăл тимĕр укçа пухнă - 1961 çула аса илнĕ пулас...

Хальхи вăхăтра унăн килĕнче пĕр витре тимĕр укçа ларать. Вĕсене пурне те совет саманинче çапса кăларнă-мĕн.

Пенсионер çав укçапа мĕн тумаллине хăй те пĕлмест.

** Уяв юррисем*

## *Епле ытарса ярам-ши?*

*Кукăр тĕплĕ шур хурăн*
*Кукри майĕпе çаврăнать.*
*Эпир вылясси-куласси*
*Çулталăкран çаврăнать.*

*Атăл çинче кимĕ вылять,*
*Атăл илемне çав кӳрет.*
*Хусан çинче хурт вылять,*
*Хусан илемне çав кӳрет.*

*Аслă урам варринче*
*Çамрăк-кĕрĕм уяв тăвать.*
*Çамрăк-кĕрĕм уяв тăвать,*
*Урам илемне çав кӳрет.*

*Çаран тулли сар чечек,*
*Епле ашса тухам-ши?*
*Сар чечек пек уява*
*Епле ытарса ярам-ши?*

*Пухса йĕркелекенĕ*
*Е.ИЛЮШКИНА.*



*Ӳкерчĕкре: чăваш юррин уявĕнче.*

# Саламлатпăр!

Ерепьел ялĕнче пурăнакан юратнă мăшăра, аттене, хуньăма, кукаçее *Павел Николаевич АВЕРЬЯНОВА* 75 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, вăрăм ĕмĕр, канлĕ ватлăх сунатпăр.

Мăшăрĕ, хĕрĕсем, кĕрӳшĕсем, мăнукĕсем.

---

Ерепьел ялĕнче пурăнакан юратнă аннене, анне, асаннене *Ольга Тимофеевна ВАСИЛЬЕВАНА* 60 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр.

Эс пурри пире савăнтарать,
Пур тăван та сана
саламлать.
Сывлăх пултăр мĕн ватăличчен,
Пурăнма сунатпăр çĕр çулччен.

Ывăлĕсем, кинĕсем, мăнукĕсем.

## ВЭГУ дипломĕ - пурнăç çулĕ

**Хĕвелтухăçри экономика, гуманитари наукисен, управленипе право институчĕ (ВЭГУ) професилле аслă вĕренӳ рынокĕнче çирĕп тĕрекленчĕ. Пĕрремĕш пысăк дата - институтăн пилĕк çулхи юбилейĕ, патшалăх аккредитацийĕ аслă вĕренӳ заведенийĕн малтанхи йывăр тапхăрĕ иртнине палăртаççĕ. Кĕске вăхăт хушшинче ВЭГУ Уралпа Атăл тăрăхĕнчи патшалăхăн мар чи пысăк аслă вĕренӳ заведенийĕ пулса тăчĕ.**

**1993 çулта Уфа хулинче йĕркеленнĕ институтăн Пушкăртстан, Тутарстан тата Раççей регионĕсен хулисенче представительствăсем пур.**

**Эпир Пĕкĕлме хулинчи представительствăн директорĕпе, техника наукисен кандидачĕпе Р.С.ШАРИФУЛЛИНПА калаçатпăр.**

**Корр. - Равис Сагдатович, шкултан вĕренсе тухакансемпе вĕсен ашшĕ-амăшĕсем ăçта вĕренме каясси çинчен хуйхăраççĕ. Патшалăх аслă вĕренӳ учрежденийĕсенче конкурс пысăк, коммерциллисенне кайсан тӳлемелле тата вĕсен çирĕпмарлăхĕ иккĕлентерет.**

Р.С. - Вĕсен шикленĕвĕ сăлтавсăр мар. Патшалăх вĕренӳ заведенийĕсем çĕнĕрен реформăланаççĕ, коммерциллисен е патшалăхăн маррисен хушшинче тĕрли пур.

Пирĕн институт 5 çул ĕçлет ĕнтĕ, пĕрремĕш студентсем дипломсем илчĕç. Институт патшалăх аккредитацине иртрĕ - çакна çине тăрса ĕçленипе, малашлăхшăн тăрăшнипе, вĕренӳпе-пурлăх çирĕп базине йĕркеленипе тума пултарнă.

**Корр. - Сирĕн институтăр мĕнле специалистсем хатĕрлет?**

Р.С. - Пирĕн 7 факультет - юридически, финанспа экономика, историпе филологи, педагогика тата психологи, ют çĕршыв чĕлхисен, физкультурăпа спорт, социаллă пурнăçпа культура ĕçĕн. Ку факультетсенче тĕрлĕ специальноçсем нумай суйласа илме пулать. Патшалăхăн аслă вĕренӳ заведенийĕсенчен эпир хальхи вăхăт ыйтни çине хăвăрт куçма пултарнипе уйрăлса тăратпăр.

**Корр. - Студентсемпе вĕсен ашшĕ-амăшĕсем пурте вĕренӳшĕн тӳлеме пултараймаççĕ.**

Р.С. - Укçа ыйтăвĕ чылай студентсемшĕн питĕ йывăр. Анчах та рынок условийĕсенче тӳлевлĕ вĕренӳсĕр май çук. Хăшĕ-пĕрисем предприятисемпе, организацисемпе калаçса татăлса вĕренеççĕ. Пирĕн патра студентсен хăшпĕр категорийĕсемшĕн тӳлессинче çăмăллăхсем палăртнă, кам-тăр спонсорсем тупать. Эпир çамрăксене ирĕклĕ предприниматель ĕçне хатĕрлетпĕр. Вĕсем хăйсен вăйĕпе, пĕлĕвĕсемпе пурнăçра çул тупаççĕ.

**Корр.- Сирĕн институтăра кĕмелли условисем мĕнле?**

Р.С. - Эпир студентсене экзаменсăрах, тестировани тата калаçу иртнерте хыççăн йышăнатпăр. Пĕкĕлмере куçăмсăр вĕренмелле, семестрсем тăрăх тӳлеме пулать. Студентсене çулталăкне икĕ хут - çуркунне тата кĕркунне йышăнатпăр. Хальхи вăхăтра кĕркуннехи йышăну пырать. Пирĕн адрес: Пĕкĕлме хули, Я.Гашек урамĕ, 10, телефонсем: 5-39-45, 3-46-61.


## "Девон-Кредит" АБ хисеплĕ вкладчикĕсем!

"Девон-Кредит" акционер банкĕ çĕнĕрен йышăннă тата пролонгированнăй вкладсем тăрăх процент ставкисене 1998 çулхи июлĕн 10-мĕшĕнчен ӳстерет.

Вкладсене йышăнассин тата упрассин условийĕсем çинчен тĕплĕнрех эсир "Девон-Кредит" Акционер банкĕн Нурлатри филиалĕнче пĕлме пултаратăр. Адрес: Советская урамĕ, 179-мĕш номерлĕ çурт. Телефонсем: 5-29-22, 65-2-27, 65-5-25.

Эпир сире ырă сунса кĕтетпĕр!

**"Девон-Кредит" АБ**

## Сывлăхăра çирĕплетес тетĕр пулсан

**КАРАВАЕВ бальзамĕ "ВИТАОН"** (20 тенкĕ). Ӳте шăйăрттарнă, кастарнă вырăна, çыртнипе тата пиçнипе пулнă сурана сиплемелли хатĕр. Шыçтармасть, ыратнине лăплантарать, вируссем ермеççĕ. Тир чирĕсене, ачасем тарланинчен сипленĕ чухне питĕ усăллă.

ОРЗ, бронхит, ларингит, гайморит, хĕрарăм чирĕсем: лактостаз, эррози, геммороой сипленĕ чухне усă кураççĕ. Çаплах шăл ыратнă, стоматит, парадонтоз вăхăтĕнче усăллă.

**КАРАВАЕВ бальзамĕ "АУРОН-ЛЮКС"** (40 тенкĕ). Пуç ыратнине тата çаврăннине, çывăрас килнине иртерсе ярать, пуç мими ĕçне лайăхлатать. Мигрень, гипертони чирĕсем тата инсульт вăхăтĕнче пулăшать. Çӳç тымарĕсене çирĕплетет тата ăна хăвăртрах ӳсме пулăшать, çӳç тăкăнма парахать, лĕкке пĕтерет.

**КАРАВАЕВ бальзамĕ "СОМАТОН-ЛЮКС"** (40 тенкĕ). Ĕç пултарулăхне ӳстерет, ывăннине, стреса иртерет. Организма шлакран тасатать, ытлашши виçене чакарать. Радикулит, артроз, остеохондроз чирĕсенчен тата çу сийĕ пуçтарăнсан, венăсем сарăлсан, суранлансан, шыçсан усă кураççĕ.

**В.В.КАРАВАЕВĂН "Сывлăх çулĕ" кĕнеки** (20 тенкĕ). Чирсене сирсе ямалли тата организма çирĕплетмелли сĕнӳсем. Йĕркеллĕ пурнăç, тĕрĕс апатланни тата Караваев бальзамĕсемпе усă курни.

Эмелсем клиника тĕрĕслевне иртнĕ, вĕсен пурин те пахалăх сертификачĕсем пур. ТР лицензийĕ пур.

**Выставка - суту-илӳ июлĕн 14-мĕшĕнче районти культура çуртĕнче 11 сехетрен пуçласа 12 сехетчен пулать.**


## Пĕлтерӳсем

1991 çулта туса кăларнă ВАЗ-2121 "Нива" сутатпăр. Хумаелĕнче Ренат Мухаметшинран ыйтса пĕлме пулать. Телефон: 3-52-64.

* * *

Икĕ пӳлĕмлĕ хваттере икĕ пĕр пӳлĕмлĕ е пĕр пӳлĕмлипе хушса тӳлесе улăштаратпăр. Телефон: 5-26-75.

* * *

Çурт сутăнать. Телефон: 2-25-94.

* * *

Гараж хапхисем сутатпăр. Телефон: 5-12-47

* * *

Ленинградская урамĕнчи 4-мĕш çурт сутăнать.

* * *

Çурт васкавлă сутатпăр (11 сотка çĕр участокĕ) е мĕнпур енчен хăтлă хваттерпе улăштаратпăр. Тукай урамĕ, 41.

## Хаклă ентешсем, тăванăмăрсем!

Илле пророк храмĕнче шалти ӳкерсе илемлетмелли ĕçсем пыраççĕ. Çак ĕçсене вĕçлеме укçа кирлĕ. Организацисемпе уйрăм çынсене чиркĕве пулăшма ыйтатпăр. Адрес: К.Маркс проспекчĕ, телефон: 5-32-63.

Леонид атте настоятель.

* * *

Илле пророк храмĕ чиркӳре юрлама вĕрентме хĕрарăмсемпе арçынсене пухать.
5-32-63 номерпе ыйтса пĕлме пулать.

АТП патĕнче приватизациленĕ икĕ пӳлĕмлĕ хваттер сутăнать. Школьная урамĕ, 84.

### *Вулакансене пĕлсе тăма*

Полиграфи майĕсем хĕсĕк пулнипе районти хаçат июль уйăхĕн çурринчен эрнере икĕ хутчен тухма тытăнать: юнкун тата шăматкун.


Пĕкĕлмери Хĕвелтухăç экономика, гуманитари наукисен, управленипе право институчĕ çак факультетсене студентсем йышăнать: юридически, финанспа экономика, историпе филологи, педагогикăпа психологи, ют çĕршыв чĕлхисен, физкультурăпа спорт, социаллă культура ĕçĕ.

Тӳлевлĕ, заочнăй майпа вĕренмелле. Тӳлевре çăмăллăхсем пур. Тестировани тĕпе хурса экзаменсемсĕрех йышăнаççĕ. Вĕренсе пĕтернĕ хыççăн патшалăх дипломне параççĕ. РФ Госкомвуз лицензийĕн номерĕ 16-227, 1995 çулхи майăн 24-мĕшĕнче панă. РФ МОПО патшалăх аккредитациленин свидетельство номерĕ 25-0109, 1997 çулхи декабрĕн 17-мĕшĕнче панă.

Адрес: Пĕкĕлме хули, Я.Гашек урамĕ, 10. Телефонсем: 5-39-45, 3-46-61.



Тĕп редактор Р.Ф.ЗАМАЛЕЕВ.
Редактор Т.И.БУРАЙКИНА.

Учредительсем: Нурлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ

Хаçат эрнере виçĕ хутчен - юнкун, эрнекун, шăматкун тутарла, вырăсла тата чăвашла тухать.

ПИРĔН АДРЕС: 423000, Нурлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, явашлă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленность, çырусемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.

Хаçата Тутар Республикин Информаципе пичет министерствинче шута илнĕ.

Регистрациленĕ номерĕ 34.

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 892. З. N 2833